Пенси тӳлессинчи çĕнĕлĕхсем

Пенси илекенсемшĕн меллĕрех

Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче пирĕн республикăри 19 районта сăнав шучĕпе пенсисене электронлă документ çаврăнăшĕн технологийĕпе усă курса çитерсе пама тытăнчĕç. Вăл шутра пирĕн районта та. Ку вăл Пенси фончĕпе «Раççей почтин» пĕрлехи пилот проекчĕ пулса тăрать. Ăна çĕршывăн 18 регионĕнче ĕçе кĕртме тытăннă. Унăн тĕллевĕ – пенсисене çитерсе парас ĕçе çĕнетсе улăштарасси, ăна май пур таран пенсионерсемшĕн меллĕрех тăвасси.

Хальхи вăхăтра ку технологипе усă курса РФ Пенси фончĕн 8 управленийĕнче ĕçлеççĕ. Апрель уйăхĕнченпе пирĕн районта та тест режимĕпе çĕнĕ технологипе усă курма тытăнатпăр. Май уйăхĕнчен вара çĕнĕ технологи пĕтĕмпех пурнăçа кĕмелле. (Ун пирки район хаçачĕн иртнĕ çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнчи номерĕнче çырса кăтартнă).

Çак вăхăтчен пенсисем тӳлесе тăрас технологи хут çине çырнă документсемпе ĕçлессипе çыхăннă пулнă. Малтан ăна Пенси фончĕн специалисчĕсем хатĕрленĕ, кайран вара почта сотрудникĕсем алăпа йĕркеленĕ. Çĕнĕ технологипе Пенси фончĕн районти управленийĕ электронлă çыхăнăвăн хӳтĕленĕ каналĕсемпе почта ведомствин пĕрлехи информацип тӳлев центрне пенсисемпе пособисен тӳленĕ тата тӳлемен суммисем пирки сведенисем парса тăрать. Центр пенси илсе тăракан кашни çынна ятарлă штрихкодлă квитанциллĕ поручени пичетлесе парать. Кайран почтальон пенсионера укçа тата тӳлев документчĕн татса илмелли пайне – квитанци парать. Почтальонра юлнă бланк пайне сканерпа обработка тăваççĕ, пенси панин отчетлă даннăйĕсене кунсерен тӳлев центрĕнчен Пенси фончĕн районти управленине ярса параççĕ.

Çавна та каласа хăварасшăн. Штрихланă кодированин çĕнĕ технологийĕ хальхи вăхăтра анлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Вăл хăвăрт, тĕрĕс тата оперативлă расчет чухне яланах кирлĕ. Унпа экономикăн тĕрлĕ отраслĕсенче усă кураççĕ ĕнтĕ. Техника хатĕрĕсемпе «вулама» май килекен штрих-кодра пенси укçине хăш кун тата мĕнле сумма çитерсе пани, унăн тĕсĕсемпе пайĕсем, çак ĕçе туса ирттерекен организацин реквизичĕсем пирки те сведенисем пур.

Апрель уйăхне илес пулсан, сăнавлă майпа усă курнипе пĕрлех пенсисене унчченхи технологипе валеçессине те пăрахăça кăларман. Çавăнпа та пенсионерсене паракан квитанцисем çине пысăк сас паллисемпе «Тĕслĕх» тесе çырса хунă.

Пенсисемпе тивĕçтермелли çĕнĕлĕхсемпе паллаштарассипе Пенси фончĕн районти управленийĕн специалисчĕсем вырăнсене тухса ăнлантару ĕçне туса ирттермелли графика çирĕплетнĕ. Унта ытти ыйтусемпе те хуравсем илме пулать. Ку ĕç пуçланнă ĕнтĕ. Çитес кунсенче çак ял тăрăхĕсенче граждансене йышăнатпăр.

Ял тăрăхĕ	Йышăну кунĕ
Оринин	Апрелĕн 14-мĕшĕ
Çатракасси	Апрелĕн 15-мĕшĕ
Турай	Апрелĕн 16-мĕшĕ
Хорнуй	Апрелĕн 18-мĕшĕ.
Чуманкасси	Апрелĕн 21-мĕшĕ
Шетмĕпуç	Апрелĕн 22-мĕшĕ
Юнкă	Апрелĕн 23-мĕшĕ
Йӳçкасси	Апрелĕн 24-мĕшĕ
Ярославка	Апрелĕн 25-мĕшĕ
Ярапайкасси	Апрелĕн 28-мĕшĕ

Уйкас Янасал, Мăн Сĕнтĕр, Ильинка, Катькас, Муркаш, Москакасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче кун пек тĕл пулусем иртрĕç те ĕнтĕ.

Н. СЕМЕНОВА,
РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пенсисем шутласа парас, çĕнĕрен шутласа парас тата тӳлес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.

Саккун пуриншĕн те пĕрре

Ответлăх пирки малтан шутламалла

Хальхи вăхăтра çынна çапса-хĕнесе пĕтерни кăна мар, унăн тивĕçне, чысне хисеплемесĕр çынсем умĕнче ятлаçни-вăрçни, усал сăмахсемпе кӳрентерни те преступлени тунă шутне кĕрет. Уншăн та саккунпа ответ тыттарма пăхнă. Ун пирки гражданссем пĕлме тивĕç. Апла пулин те хăш-пĕр чухне, уйрăмах эрех сыпса пуçа минретсен, çавăн пирки манса каятпăр. Эрех сыпнă çын хăйне пĕтĕмпех тĕрĕс тунăн туять, унăн никама та парăнас килмест. Унăн хăтланăвĕсем пĕтĕмпех тĕрĕс тейĕн. Уйрăмах вара ку ларутăрава арçын мар, хĕрарăм лексен пушшех те тĕлĕнмелле.

Акă мартăн 21-мĕшĕнче районти пĕрремĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судьи Т.М. Салдыркина çакăн пек ĕç пăхса тухрĕ. Мăн Тутаркассинче пурăнакан Елена Варсанофьевна Петрована, 1986 çулта çуралнăскере тата вăхăтлăх ниçта та ĕçлеменскере, Раççей Федерацийĕн Уголовнăй кодексĕн 319-мĕш статйипе айăпласа 7 пин тенкĕ штраф-лама йышăнчĕ.

Ĕçĕ вара акă мĕнре. 2007 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕнче 17 сехет çитеспе Е.В. Петрова, эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕскер, районти шалти ĕçсен пайĕнче административлă майпа правăна пăсни пирки документсем хатĕрленĕ тата хăй кам пулнине палăртнă чухне, право сыхлавĕн органĕсен сотрудникĕсем тĕлĕшпе усал сăмахсемпе ятлаçнă, кӳрентермелли сăмахсем каланă. Ку вара милиционерсем хăйсен служба тивĕçне пурнăçланă вăхăтра пулса иртнĕ. Çак самант та пĕлтерĕшлĕ.

Судра Е.В. Петрова хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ, ку ĕçе судра уйрăммăн пăхса тухмасăрах йышăну тума ыйтрĕ. Çак йĕркепе патшалăх айăплавçи те, хӳтĕлекен те, шар куракан шутланакан Ф.Н. Бычков та килĕшрĕç.

Суд ĕçĕн материалĕсене пăхса тухнă чухне мировой судья ку ĕç пирки тĕрĕслев материалĕсем çителĕклĕ пулнине, Е.В. Петрова чăннипех те право сыхлавĕн органĕсен ĕçченĕсем тĕлĕшпе саккун йĕркине пăснине палăртрĕ. Кунпа пĕрлех айăпланакан хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăннине, унччен вăл судпа айăпланманнине тата нарколог тата психиатр патĕнче учетра тăманнине те шута илнĕ. Шел пулин те, кусем вĕсем айăплав виçине çăмăллатмалли мелсем çеç, анчах та саккуна пăсрăн пулсан вара уншăн явап тытасах пулать. Çакăн пек пулса тухрĕ ку хутĕнче те.

Е. ЕГОРОВ,
район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.

Район прокуратуринче

Газпа пĕлсе усă курмалла

Вăрттăнлăх мар, хальхи вăхăтра йăлари условисенче газпа пĕлсе усă курманнипе пурăнмалли çуртсенче инкексем сахал мар пулаççĕ. Çавна май район прокуратури граждансем пурăнмалли çуртсенче газ оборудованийĕсемпе епле усă курнине тĕрĕслерĕ.

Тĕрĕслев çавна кăтартса пачĕ. Муркашри Восточная урамри 6-мĕш тата 7-мĕш номерсемлĕ нумай хваттерлĕ çуртсенче строительство нормисемпе правилисене, пушар хăрушсăрлăхĕн нормисене пăснă тĕслĕхсем пур. Çакă газпа усă курассипе çыхăннă. Пурăнмалли пӳлĕмсенче углеродлă газ баллонĕсене вырнаçтарнă. Çакă вара ку хваттерсенче пурăнакансемшĕн кăна мар, ытти хваттерсенче пурăнакансемшĕн те пурнăçшăн хăрушлăх кăларса тăратма пултарать. Çавна май район сучĕ асăннă граждансем тĕлĕшпе 12 иск заявлийĕ тăратрĕ. Вĕсем пурăнмалли çурт-йĕрте газ баллонĕсем упрама юраннипе, вĕсемпе усă курассине чарса лартассипе çыхăннă.

Гражданла çак ĕçсене суд пăхса тухиччен прокурор требованийĕсене асăннă çуртсенче пурăнакансем хăйсен ирĕкĕпех пурнăçларĕç. Çапла вара вĕсем тĕлĕшпе судра ĕçсем пăхса тухмĕç. Апла пулин те газпа йăлара усă курмалли правилăсене пĕр сăмахсăрах пурнăçлама кирли пирки саманлăха та манмалла мар.

В. ЗАХАРОВ,
район прокурорĕн пулăшаканĕ.

Фестиваль

«Кĕмĕл саслă шăнкăравсем»

Мартăн 26-мĕшĕнче Муркаш шкулĕнче ют çĕршыв чĕлхипе юрлассипе «Кĕмĕл саслă шăнкăравсем» ятпа иккĕмĕш фестиваль иртрĕ. Унта 18 шкултан 4–11 классенче вĕренекен 67 пултарулла çамрăк юрăç хутшăнчĕ. Ăмăрту программипе килĕшӳллĕн çĕнтерӳçĕсене 3 дипломпа тата ятарлă 2 парнепе хавхалантарма палăртнăччĕ. Анчах та ăмăртăва хутшăнакансем йышлă пулнине шута илсе вĕсене кĕçĕн (4–6 классенче вĕренекенсем), вăтам (7–9 кл.) тата аслă (10–11 кл.) ушкăнсене пайласа çĕнтерӳçĕсене уйрăмшар палăртма тиврĕ.

Çапла майпа ачасем 9 диплома тивĕçрĕç, унсăр пуçне «Чи лайăх юрлакан» тата «Куракансене уйрăмах килĕшекен» ятсене тивĕçекенсем пулчĕç. Кĕçĕн ӳсĕмри ушкăнра М. Цветковапа Е. Николаева (Мăн Сĕнтĕр), А. Курбановпа Т. Волкова (Оринин), Д. Данилов, Е. Данилов тата И. Зайцев (Кашмаш), вăтам ӳсĕмрисем хушшинче Н. Бряндинская (Нискасси), Н. Крючкова (Муркаш), Н. Семенова (Çатракасси), аслă ушкăнрисем хушшинче О. Уховапа К. Кузьмина (Мăн Сĕнтĕр), А. Волковапа Т. Соломина (Калайкасси), Ж. Антонова (Муркаш) пултарулла пулчĕç. «Чи лайăх юралакан» ята вара Шомик шкулĕнчи 7 класра вĕренекен А. Поляков тивĕç пулчĕ. Куракансем çавăн пекех Юнкăран килнĕ А. Золототрубов гитарăпа каласа юрланине, Тойкилтĕри Т. Сабитова, Муркашри М. Ершовапа Т. Купцова, Йӳçкассинчи Н. Тимофеевапа А. Кузьмина килĕшӳллĕ хуснанусем туса лайăх юрланине тăваллăн алă çупса кĕтсе илчĕç.

Ачасен репертуарĕнче тĕрлĕ юрăсем пулчĕç: вырăс чĕлхинчен акăлчанла куçарнисем, тĕнчипе паллă ансамбльсемпе уйрăм юрăçсен хайлавĕсем. Ăмăртăва хутшăнакансем уйрăмшарăн та, икшерĕн те, виçшерĕн те юрларĕç, юрăсен кĕввисем вара ытларах чухне караоке евĕрлĕ пулчĕç.

Ăмăртăва йĕркелесе ирттерес ĕçре районти ют çĕршыв чĕлхисене вĕрентекенсен методика пĕрлешĕвĕ пуçаруллă пулчĕ, уйрăмах Муркаш шкулĕнчи акăлчан чĕлхине вĕрентекен Н.В. Толстова. Сăмах май вара çак ăмăрту пĕрремĕш хут икĕ çул маларах вăл пуçарнипех иртнĕччĕ. Фестивале ертсе пыракансем те Надежда Валерьевнапа унăн вĕренекенĕ Надежда Краснова пулчĕç.

Ют çĕршыв чĕлхисене вĕренесси çăмăл ĕç мар. Çак ĕçре пур майсемпе те усă курма тăрăшмалла. Юрăсен сăмахĕсем вара ачасен асĕнче яланлăхах юлаççĕ, çавăнпа пĕрлех вĕсен культура шайĕ те ӳсет. Ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсене çутта кăлараканĕ И.Я. Яковлев çапла калана: «Икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс».

Н. ЕРШОВ,
районти акăлчан чĕлхине вĕрентекенсен методика пĕрлешĕвĕн ертӳçи.

Ырă ĕçсен çулталăкĕнче

Пирĕн тӳпе те пултăр тетпĕр

2008 çула Раççей Президенчĕ Семье çулталăкĕ, Чăваш Республикин Президенчĕ вара Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕç. Эпир те, Турай шкулĕнче вĕренекенсем, шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ З.П. Григорьева ертсе пынипе Ырă ĕçсен çулталăкне активлă хутшăнас терĕмĕр. Шкулта «Эпир пĕрле» клуб йĕркелерĕмĕр. Унăн девизĕ «Ырă тума васкар!» пулса тăрать. Клуб канашне те суйларăмăр.

Турай ял тăрăхĕн территорийĕнче воин-интернационалистсем 5 çын, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем 17 çын, пĕччен пурăнакан ватăсемпе инвалидсем те пур. Кашни ветеран тĕлĕшпех пулăшу кирлисем патне ответлисене çирĕплетсе тухрăмăр.

Пĕччен пурăнакан ватă çынсене куллен пулăшма тăрăшатпăр: çăлтан шыв çĕклесе, урайсене çуса паратпăр, кил-çуртра тирпейлетпĕр, магазина кайса çимеллисем илсе килетпĕр. Ватă çынсем вара пире яланах хавас. Мĕншĕн тесен ялта пĕччен пурăнма çăмăлах мар.

Çулав ялĕнче Валентина Николаевна Сафонова пурăнать. Вăл чирлет, пĕччен ăна уйрăмах йывăр. 7-мĕш класра вĕренекен Ирина Осипова вара ун патĕнче кашни кунах пулать, кил-тĕрĕшре пулăшать.

Эпир Турайри ваттисен çуртне тăтăшах çӳретпĕр. Пирĕн «Çунатлă çамрăклăх» фольклор ушкăнĕ Ватă çынсен кунĕнче, ытти уявсенче концерт программипе савăнтарать.

Ватă çынсене эпир хамăр алăпа тунă парнесене паратпăр. Çĕнĕ çул уявĕсенче эпир карнавал тумĕсемпе ватă çынсемпе ташлатпăр тата юрлатпăр.

Эпĕ тата манăн юлташсем ырă ĕçсен çурхи эрнине активлă хутшăнатпăр. «Сывă-и, çуркунне!» ятпа субботник йĕркелетпĕр, шăнкăрчсем валли вĕллесем туса çакатпăр, ыр кăмăллăх тĕллевĕсемпе хатĕрсем пухатпăр, шкул библиотекинче кĕнекесене юсатпăр.

Эпир пурне те çапла чĕнсе калатпăр. Айтăр-ха пурте ырă ĕçсем ытларах тума тăрăшар, ыттисемпе ăшпиллĕ пулар. Çынсем хаяр çуралмаççĕ вĕт-ха. Ырăлăх тĕнчене сыхласа хăварать тесе ахальтен каламаççĕ.

Оля ЕФИМОВА,
Турай шкулĕнче 11-мĕш класра вĕренекен.

Ентешĕн кĕнеки

«Чĕр сывлăм сиплĕхĕ»

Раиса Соловьева сăввисем – çутă, ăслă, чĕререн тухакан лирика. Унăн малтанхи сăввисем районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра, республикăри «Пике», «Таван Атăл» журналсенче пичетленнĕ. Сăввисен тематики тĕрлĕ енлĕ. Унăн хайлавĕсем вулакан туйăмне хавхалантараççĕ, пăлхантараççĕ, шухăша яраççĕ. Лирикăлла герой – паянхи кăткăс вăхăтăн сăнарĕ.

Чĕр сывлăм сиплĕхĕ – сăнарлă поэзи сиплĕхĕ. «Чĕр сывлăм сиплĕхĕ» тесе ят панă Р. Соловьева хăйĕн 2006 çулта пичетленсе тухнă кĕнекине. Çак кĕнеке Муркаш районĕн ял тăрхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра «Çулталăкри чи лайăх вулакан кĕнеке – 2006» конкурса тăратнă кĕнекесен çулĕкĕ çинче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Мĕншĕн тесен Раиса Соловьева – пирĕн ентеш. Вăл Муркаш районĕнчи Вăрманкас Хачăк ялĕнче 1955 çулта çуралнă. Халĕ Ивановка ялĕнче пурăнать, сăвăсем çырать.

Тăван сăмахлăхăн ани çĕнĕ поэзисĕр пушă та кичем пулнă пулĕччĕ. Поэзие çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртекенсенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ пирĕн ентешĕмĕр.

…Кăмăл тунсăхĕн чĕре юрри!

Кăкăрне вăл шăнăçаймарĕ-и?

Акă ĕмĕтленчĕ халь, кĕл турĕ-и?

Ах, пуласчĕ ман çак ĕмĕтĕн турри.

Ку йĕркесем сăвăçăн малтанхи сăввинчен пулчĕç. Хайлавĕсенчен автор пурнăçра хăй вырăнне шырани, ĕмĕтленни, шанни курăнать.

Раиса Соловьева Москакасси шкулĕнче саккăрмĕш класа çити вĕреннĕ. Вăтам пĕлĕве Муркаш шкулĕнче илнĕ. Шупашкарти строительсен техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн «Чувашсельхозпроектпа» «Саратовпроектра» техник-строителĕте вăй хунă, трактор тăвакан заводра ăшăпа шыв парса тăракан цехра мастерта ĕçленĕ. Пĕр хушă Воркута хулинче стройкăра штукатур-маляр, прораб пулса тăрăшнă. Çакă ăна чĕринчен шăранса тухакан йĕркесене сăвва хывма чăрмантарман. Ăçта кăна илсе çитермен ăна пурнăç кустăрми. Анчах кирек ăçта пулсан та чунĕ тăван кĕтеселлех туртнă ахăр.

Автор тăван кĕтесĕнче хăйне телейлĕ туять. Çакă сăвă йĕркисенче те витĕм тупать.

Раиса Соловьева çырнă сăвăсем ытларах элегиллĕрех (салхуллăрах). Çав хушăрах çамрăкла романтизм паллисем те вырăн тупнă. Пурнăçра курни-туйни унăн поэзине гражданла лирика тĕсĕпе пуянлатать. Сăвăç пултарулăхĕн пиçĕлĕхĕ, тарăн шухăшĕ, кăмăлтан тухакан чăваш сăпайлăхĕ «Чĕр сывлăм сиплĕхĕ» кĕнекене кĕнĕ мĕн пур сăввисенче палăрса тăрать. Çыравçăн чун пуянлăхĕ, хĕрӳ туйăмĕ, пурнăç илемне курас ăнтăлăвĕ чĕрене пырса тивет. Вĕсенче килес ăрусене вĕрентсе каланă ырă сĕнӳсем пайтах.

Раиса Соловьеван татах та çĕнĕ кĕнекесем тухса тăрасса, вĕсене çынсем юратса вуласса шанас килет. Ентешĕмĕре ăнăçу сунар.

Э. ДИМИТРИЕВА,
Муркаш районĕн ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăн вулакансемпе ĕçлекен пайĕн ертӳçи.

Пирĕн пата çыраççĕ

Пукане театрĕн тусĕсем

Эпĕ Москакассинчи вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренетĕп. Мана çак шкулта вĕренме питĕ килĕшет. Мĕншĕн тесен кунта учительсем ачасене тарăн пĕлӳ пама тăрăшаççĕ, уроксем хыççăн вара тĕрлĕ кружоксене çӳреме май пур.

Эпĕ спортпа туслă, кĕнекесем вулама юрататăп тата «Пуканесен театрĕ» кружока çӳреме кăмăллатăп. Çак кружока шкул библиотекарĕ Г.А. Тимофеева 20 çул ытла ертсе пырать ĕнтĕ.

Спектакль режиссерĕ те, художникĕсем те, тумсене çĕлекенĕсем те хамăрах. Тата çакна палăртса хăварас килет. Ача-пăча юмахĕ вăл кĕвĕ-çемĕпе пуян пулсан татах та илемлĕрех. Çакна асра тытса кĕвĕ хатĕрлекенĕ те пур.

Спектакльте выляма чăн-чăн артист пекех пулмалла. Мĕншĕн тесен чи малтан ачасен сасси хăв вылякан сăнарпа килĕшсе тăмалла. Çак сăнарпа пĕрле вылятăн, кулатăн, пĕрле хуйхăратăн. Чăннипе кашни роле выляма пысăк ăстаçă пулмалла.

Çак кружока çӳрени пире вĕренӳре те пулăшать тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен сăмахсене тĕрĕс, интонацип каласа хăнăхмалла тата сăмахсене астуса юлса пăхмасăр вĕренни те пысăк пулăшу парать. Спектакльсене эпир чăвашла та, вырăсла та лартса паратпăр, куракансем пире яланах тăваллăн алă çупса хавхалантараççĕ.

Кашни çулах ача-пăча кĕнекин эрни пуçлансан шкулта тата «Колокольчик» ача садĕнче, ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсенче те хамăр пултарулăха кăтартатпăр. Кăçал та пуш уйăхĕнче Раиса Сарпи çырнă «Пукане» юмах тăрăх спектакль хатĕрлерĕмĕр. Пьеса авторне шкула та чĕнтĕмĕр. Раиса Васильевна пире пурне те тав сăмахĕ каларĕ, спектакль ăна питĕ килĕшни çинчен чунтан савăнса пĕлтерчĕ, хăйĕн кĕнекисене шкул библиотекине парнелерĕ, çитес çул та спектакль хатĕрлеме сĕнӳ пачĕ, килсе курма шантарчĕ.

Анна ЦАРЕВА.
Москакасси шкулĕ.